29-182

771

АЂА-ПӐЂА КӖНЕКИ

Ç. ШӐПЂӐК

# ВЕРУК

ЂӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
Шупашкар 1929 çул

Ç. ШĂПЂĂК

# ВЕРУК

Ађапăђа ваљљи çырнă илемлĕ литтераттурă ăмăртăвĕнђе иккĕмĕш парне (преми) илнĕ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1929 ÇУЛ

4251

Отпечатано
в типографии школы ФЗУ
Чувашлит № 1123.
Заказ № 232.
Напеч. 3000 экзамп.

# ВЕРУК.

Кĕрхи тискер сивĕ çил тĕнђене туллаТ. Вăхăтăн, вăхăтăн вĕтĕ çумăр çăваТ. Тĕнђе илемне тискер сăн параТ.

— Ух, сивĕ!

— Тискер.

— Салху.

— Çанталăкĕнђен ытла, самани тискер, тесе пӳплеççĕ шыв хĕррине пынă хĕрарăмсем. Колђак Хусана илни çинђен сӳтсе-йавса, хăйсен старикĕсене салтака илесрен шикленеççĕ вĕсем.

— Ваçик салтака кайсан, вилес пулаТ вара ман, тесе хуђĕ Верук та хуйхăрса.

Тискер кĕрпе тискер самана çинђен ђылай пуплесе тăђĕç арăмсем. Пĕр-пĕринпе пӳплесе ăшђикĕсем кӳтнипе, хуйхăллăн утрĕç йерипе килелле.

Сивĕ.

Тискер.

* * *

Çумăр ђересрен йарат̆. Сивĕ çилĕ çĕçĕпех касат̆. Ниçта пусма çук, пылђăк. Пăсланнă лашасем йерипе пыраççĕ. Харăс шăнкăравсем хуллен йантраççĕ. Çамрăксем хурлăхăн йурă ђăсаççĕ. Ку, çамрăксемшĕн йулашки сехет. Вĕсем пайан хĕрлĕ çара тухса кайаççĕ.

Акă йал хапхи патне халăх пухăннă. Акă Верук та хăйĕн йуратнă упăшкине, Васике, йулашки хут ђуп тăват̆.

— Васик, урăх тен кураймăпăр та.

Пĕри вилсен — тепри асăнмалла пултăр. Ан ман, Васик!..

— Верук, манран ан хăра. Есĕ ху сывлăхна ђипертерех усра. Ан ман. Сывă пул...

Çумăр çунă çемĕн çăват̆. Çилĕ те çаплах касат̆. Васике ăсатма пынă лашасем уй йенђе, сивĕ çумăрпа шăннипе, тапăртатса çеç тăраççĕ. Анђах Васик хăйĕн йуратнă, çамрăк арăмĕпе нийепле те пуплесе пĕтерейместь.

— Халăх, сывă пулăр. Мана усал ан асăнăр. Епĕ...

Васик халăха сăмах каласа хăварасшăнђђĕ. Анђах Верук вăйĕ пĕтнипе сулăнса тăнине

курђĕ те, сасартăк ђарăнса, ăна ыталаса илђĕ. Верук, вилнĕ çын пек, Ваçике хирĕç нимĕн те калаймарĕ. Çавăнтах татăлса анђĕ.

Ваçик пĕр самантра курăнми çухалђĕ.

Верука хурăнташĕсем, çĕклесе кайнă пек, çавăтса кайрĕç.

— Нумайах та пурнаймарĕç, шереметсем, тесе хĕрхенђĕç хăшĕ-пĕрисем.

* * *

Тискер кĕр кĕрлесе иртрĕ. Сивĕ хĕл те çав шутах турĕ. Çуркунне те çитрĕ вĕçтерсе. Йапăхса кулсах вăл сивĕ, шурă йура вăтантарђĕ, тип çырмасене çурхи шывпа тултарђĕ.

Анђах пирĕн Верук çавах халсăр. Çавах та тухса çӳреймест. Çынсем пир-авăр та тĕртеççĕ. Вăл ăна та тĕртеймест. Темĕн пулђĕ. Пĕтĕмпех вилĕ сăнĕ çапрĕ. Ӳт-кĕлетки унăн пĕтĕмпех ђакрĕ.

Вăрахăнах çуркунне иртрĕ. Çитрĕç çимĕк кунĕсем. Анкартисенђе, пахђасенђе тапранђĕç тĕрлĕрен ĕçсем. Верук çавах та ĕçе йерейместь. Амăшĕ ăна пăртак çилленме те шутлаť. Анђах, çав вăхăтрах хĕрхенсе, шеллесе те илет. Пур кинĕнђен те вăл, Ваçик арăмне, çак Верука

çеç йуратаť. Çавăнпа та вăл ăна сыватасшăн тĕрлĕрен йумăçсем патне çиткелет. Вăрнар мăнастирне те илсе çÿрет. Акă нумайах та пулмасť, таврари паллă йумăç — Çĕрпел, Пашалу Çтаппанĕ килсе пĕр ерне пурăнса кайрĕ. Кинне сыватасах тесе, ватă карђăк вĕсене мунђа та хутса пађĕ.

Анђах, нимĕн усси те пулмарĕ. Верук, пăртак çÿреме пуçланăскер, тепĕр хут пулђĕ. Каллех вырăн çине ÿкрĕ. Темшĕн амăшне Пашалу Çтаппанне илсе килнĕшĕн тÿрĕ-тÿрĕ сăмахсем те кала-кала хуђĕ. Амăшĕ çавах нимĕн те сисмерĕ.

Васик пĕрмайах çыру çырса тăраť. Вăл хăй пурнăçĕшĕн пĕрре те хуйхăрмасť. Халь вăл Хĕрлĕ комантирте пурăнаť. Килте уншăн хуйхăрнине астуса, арăмĕ те уншăн хуйхăрсах сывмарланнине аса илсе, вĕсене çăмăлатасшăн: темĕн тĕрлĕ йăпатса çыраť. Арăмĕн ђирĕ вăрăма кайнине манмасăр, кашни хуђĕ çинђех пульнитсана кайма тархаслаť. Кашни хуђĕ çинех, „нумай тăмастăп. Киле пыратăп. Çавăнпа та халь нумайах çырмастăп. Анне, Верук, сире иксĕре те йуратса, ыталаса ђуп туса илетĕп“, тесе пĕтерет.

Ваçик хутне вуласан Верук та çăмăлансах кайаҭ. Анђах, çав вăхăтрах, сасартăк хĕрелсе, хуралса кайаҭ. Кăнтăрла та, каç та, ђас-ђасах Верук Ваçик йатне асăнаҭ. Унпала хире-хирĕç тăрса калаçнă пек, темĕн аташаҭ. Кăна амăшĕ те ђас-ђасах асăрхаҭ.

Ваçик çырăвĕ тăрăх Верук пуљнитсана кайма та хатĕрленет. Анђах, кÿршĕ арăмĕсем пырса:—Сана, Верук, вĕри çĕлен йернĕ, пуљнитсана кайсан та çавах вĕлерет вăл, тесе хăвараççĕ. Вĕсен сăмахне итлесе Верук пуљнитсаран та шикленсе тăраҭ. Унта вилесрен хăраса, пуљнитса тесенех, амăшĕн те ђĕри çурăлсах тухаҭ.

Йалта пурте: Верука вĕри çĕлен йернĕ; нумайах пурăнийес çук, вилет, тесе пуплеççĕ. Çак сăмахсем çынсем урлă Верук хăлхине те çитсе кĕреççĕ. Çавăнпа та Верук хăйне вĕри çĕленех йернĕ тесе шутлаҭ. Мĕншĕн тесен, Ваçике вăл пĕрмайах кураҭ. Вĕри çĕлен Ваçик пулса пыраҭ, тесе шутлаҭ.

— Анне, манран ырă çын пулас çук çавах. Айта пуљнитсана кайса пăхар, терĕ пĕрре Верук амăшне.

Çак сăмахсем амăшĕн ђĕрине те çемçетсех йађĕç. Темле вара, çав вăхăтрах, тухса та

шутарђёç пуљнитсана хыççăр урапаллă, çӳрен кĕсрипе.

*
* *

Пуљнитсана кайарах çитнипе, кăсем пынă вăхăта, пуљнитсара çынсем те пĕтнĕ. Пĕр каçăр сăмсаллă арăм çеç кĕçĕллĕ ађине йăтса кăсене хирĕç тухса кайрĕ. Çавăнпа та çитнĕ-çитменех шала та кĕмелле пулђĕ.

— Хăвăртрах кĕр, инке! тесе ăшшăн ђĕнсе илђĕ кăна ђĕлĕм ђĕркекен, ывăннă хĕвершăл

— Кĕреп теха, терĕ хуллен кĕрсе Верук та.

— Ай-ай, ытла та сăну пĕтнĕçке сан, мĕн ђирпе ара есĕ, инке?

— Ёлĕкренпех те çав сăнлăрах пулнă та епĕ.

— Хаљ пушшех пулнă пуљ, мĕн ђирпе ара, есĕ?

Хвершăл питĕ те ăшшăн пупленипе Верукăн ђунĕ уçăлсах карĕ. Çавăнпа та вăл хăй ђирĕ çинђен хăй йулташне каланă пекех тапратрĕ.

— Ман... ђирĕ те ђирлех мар, калама та киђем ĕнтĕ.

— Мĕн киђемĕ пултăр ара? тесе татах йăвашлатрĕ хвершăл хăйĕн сассине.

— Мĕн... тесе пуçларĕ Верук, — ку ђирпе епĕ çулталăк хурлăх куратăп. Ĕçмен имçам,

ђӳклемен сурӑм, пуҫҫапман ђиркӳ, ҫитмен йумӑҫ хӑвармарӑм ӗнтӗ таврара. Мӗн ђухлӗ ҫӳрерӗм, ҫавӑн ђухлӗ хавшаклансах пытӑм. Вӑрнар мӑнастырне кайсан, те ђан сасси килӗшмерӗ, пушшех пултӑм. Вара Вӑрнартан тавӑрӑнасшӑнах, тӳрех Ҫӗрпел Пашалу Ҫтаппанӗ патне кӗтӗм. Вӑл сыватат͡ӑпах тесе, хамӑрпах ларса пыђӗ. Пӗр ерне пурӑнса карӗ.

— Мӗнле хвершӑл ара вӑл Пашалу Ҫтаппанӗ?

— Ҫук, хвершӑл мар вӑл, таврари паллӑ йумӑҫ.

Уҫӑ ђӳређерен ӑшӑ ҫил кӗрсе Верукӑн халат аркине хускатрӗ. Верук та йумахне каллех тапратрӗ.

— Ҫапла вара нумай ҫӳрерӗм, йулашкинђен — сирӗн пата килсе пӑхас, терӗм.

— Тахҫанах килмеллеђђӗ, тахҫанах, инке, терӗ хвершӑл сассине татах та ҫемҫетсе, — лар, инке.

— Ларӑптаха. Мӗн... килмеллеђђӗ те ҫав, ман ђирӗ усал ђир те ӗнтӗ.

— Ђир вӑл пурте усал пуђ. Лайӑх пулсан ђир те пулмасť вара вӑл.

— Ах, ман ахаљ усал ђир мар ҫав. Мана вӗри ҫӗлен йерне теҫҫӗ.

Çĕлен тесен, хвершăл сасартăк хăраса ўкрĕ.

— Ма паçăрах каламастăн. Хурийи, ай хурăн пуçли? Ăçтан сăхрĕ?

— Çук, вĕри çĕлен, тетĕп.

— Ăхă, килха кунтарах, лайăхрах пăхам, — тесе йађĕ хвершăл.

— Мăнастирсене, йумăçсене çўритђен тахçанах хамăр пата — пуљнитсана килмеллеђђĕ, тетĕп. Сана нимĕнле вĕри çĕлен те йермен. Есĕ вăрăм ђире кайнипе, санăн йун пĕтнĕ, — малокрови пулнă.

Хаљ есĕ кунта сывалма йулатăн. Сана кунта вăй кĕртекен апатсем çитерĕпĕр, емелсем ĕçтерĕпĕр. Пĕр уйăх хушшинђе есĕ сывă çынах пулса тухăн.

Çак сăмахсене илтсен, Верук савăнсах карĕ. Пайанах йулма та шут тытрĕ.

Амăшĕ те кинĕ сываласса шанса лĕпĕстеттерђĕ килелле çўрен кĕсрипе.

Тепĕр уйăхран Верук ђăнанах та сывалса çите пуçларĕ.

Ултă ернерен Верук пĕтĕмпех сывалса тухрĕ. Хăйĕн вунтăхăр çулхи сăнне нимĕн те улăштарман. Иртнĕ хĕллехинђен ăна татах та тўр-

летнĕ. Ђăн ђăнах та Верук ђип-ђипер çынах, пуриншĕн те вăл илемлĕ, кĕрнеклĕ.

*
* *

Анкартисенђи капансем вырăнне улăм купи-сем пуçĕсене каçăртса, пĕлĕтелле пăхаççĕ. Вăрахăн, касă çил килсен, тураман çӳçĕсене вĕлкĕштерсе илеççĕ.

Пахђасенђи, шапа пăттиллĕ пĕвесем пек курăнса выртакан, улма вырăнĕсем те хуралнă, пĕртте ђуна туртмаççĕ.

Пурлăхне йăтайми ђӳкенсе ларакан çимĕç йăвăççем те пурлăхĕсенђен тасалнă. Темĕнле йăвăр хуйăха кĕтсе, хăйсен саралнă тумĕсене çĕрелле сапаççĕ. Çаралса йулнă турађĕсем кĕрхи çанталăкпа килĕшсе пĕр тĕс пулаççĕ.

Хĕл çывăхне çывхарнă пулин те кĕркунне таса, уйар тăрат̆. Çумăр та нимĕн те çумаст̆. Çилĕ те сассине памаст̆. Кĕрхи хĕвел хĕртнĕ-çемĕн хĕртет. Хресђене ĕç тума илĕртет.

Верукпа амăшĕ кĕрхи хĕвел ăшшинђе сӳс тылласа кĕђĕç. Вуђахха çакса хăварнă хуранне антарса кăнтăр апатне тимлеççĕ. Ĕç хырăмне вĕри улмапа, кăвак уйранпа ђӳклеççĕ.

— Хуçи пури?—терĕ урамран претçетаттĕл, пĕр палламан çамрăкрах арçынпа.

— Пур, пур, терĕ Верук хирĕç тулли çăвар улмапа. Хăй çавăнтах темле пулса карĕ: тен ку салтак, тен Ваçик патĕнђен, тен?...

— Турă усала сирех. Епĕ тĕлĕк путлех курманђђĕ. Мĕнле çын пулђĕ ара ку, кин? терĕ Верукăн амăшĕ уйранне сыпса.

— Пĕлместĕп, терĕ Верук та ђарăнса.

— Пирĕн киле-ес, апата вăй патăр, терĕç килнĕ çынсем.

— Килĕрех, терĕ Верук вĕсем çине пăхмасăрах.

— Верук, тунтикун сан çитĕннисен шкулне вĕренме каймалла та, кĕрсе калас, терĕмĕр. Ак, ку — сире вĕрентекен уђитлĕ, терĕ претçетаттĕл ликвитаттăр çиње кăтартса.

— Пирĕн йышĕте çук та, епĕ унта çӳреме пултарийес çук, тесе тавăрђĕ Верук.

— Хаљ ĕç вăхăђех мар, кайкаласа çӳрекелĕн, Верук. Каймалла тунăскерне, кайасах пулаť ĕнтĕ. Ну, сывă пулăрха.

— И-и тăну-пуçу, сире çыру пурђђĕ тата, ун çинђен мансах кайнă, терĕ тухса кайма алăк хăлăпне тытнă претçетаттĕл.

— Хăвах вуласа пар еппин, Йăван пиђђе! терĕ Верук. „... çырмаллисем тата та нумай

Вĕрук. Анђах, ху хутла пĕлменнипе, çынна ђăрмантарасран çеç нумай çырмастăп, тесе пĕтернĕ çыруне Ваçик.

— Верук, вăт Ваçик мĕн çырать? Тата есĕ шкула кайасшăн мар. Çырма, вулама вĕренсен хăвăрах усă вăл, тесе хăварђĕ, сăмаха вăхăтра тытма пĕлекен претçетаттĕл.

— Анне, кайас пули вара ку шкула? тесе хуђĕ йăвашшăн амăшне Верук.

— Ара, кайатăн пулсан — кай. Ват çын мар хаљ есĕр. Санран аслисем те вĕренекенсем пур та ĕнтĕ ку хушăра. Лисук вĕренме Шупашкара упăшки вилсен карĕ. Вĕренет çаплах. Ку — Шупашкар марха, килте, вĕренкелĕн. Ху кăмăлу хăвăнта пултăр та, терĕ амăшĕ сĕтелне шăлса.

Кашни çырăва çырассине, вулаттарассине çын куçĕнђен пăхса йăлăхнă Верук шкула каймах шут тытрĕ.

— Ара, вĕренни — хамăршăн ĕнтĕ вăл, терĕ амăшĕ.

*
* *

Ликпунктра Верук пек лайăх вĕренекен урăх çынĕ те çук. Икĕ уйăхра Верук пĕр такăнмасăр вулакан пулђĕ. Çырăвĕ те унăн ыттисенђен

йĕркеллĕрех те, илемлĕрех те тухаť. Вăл çын çырнисене те вуласа кăларма пултараť. Çавăнпа та вăл кашни кунах Ваçикрен çыру кĕтет. Анђах, йури тунă пекех, ку хушăра Ваçик пĕр çыру та çырмасť. Ним тума пĕлмесĕр. Верук Ваçикĕн ĕлĕкрех килнĕ, кивĕ çырусене тыта-тыта вулаť. Çырусем кивĕ пулин те, амăшĕ те кĕнђеле авăрлама пăрахсах итлет. Верук вуланине кура, амăшĕн хăйĕн те вулас килсе лараť.

— Парха, кин, хам вуласа пăхам.

— Ме, анне, ме... тет Верук кулса.

— Ман куç курмасť çав хут çине пăхма, тет амăшĕ те тăлăха йулнă шăл тунисене кăтартса.

— Анне, тавай пĕрре Ваçик патне çырар.

— Пултараймастăн пуљ çав, ађам!..

Хăйсем мĕн çырас килнине пĕтĕмпех çырђĕç. Шурă ĕни ула пăру пăруланине те хăвармарĕç. Ватă, хура ђăххи сивĕпе кашта çинђен ўксе вилнине çырмасăр манса хăварнă пулнă. Ăна та кайран кăвак канвертăн тепĕр йенне çырса пĕлтерђĕ Верук. Ара, çырмасăр. Ваçикпе кăçалхипе виçĕ çул курăнман вĕт! Çыру çыртарассине те çын кусĕнђен пăхнипе, виçĕ

çул мĕн çырас килнисене çырмасăр пуранна. Ваçикрен аҕа пек йулнă 18 çулхи Верук та, 20 çула пусса, çын пĕвне çитнĕ.

Верук, шкул ĕçне туса пынă вăхăтрах, килти ĕçсене те манмасť. Вăл шкулта та, клите те ĕлкĕрсе пыраť. Йуратнă çӳрен кĕсри унăн нихăçан та выçă тăмасť. Шурă ĕни те апатсăр макăрмасť. Çиллĕ тăман та, нихăçан та хапха умне пусмăр хываймасť. Верук вăл нимĕнле ĕçе те парăнмасť. Арçын ĕçĕ те, хĕрарăм ĕçĕ те Верукшăн пĕрех.

— Кин, Йăван çак хута илсе килсе паҕĕ те:— ку повеçкă, тесе хăварҕĕ, терĕ амăшĕ Верук шкултан таврăнсан.

— Пĕр кунҕе Мĕкĕте пиҕҕепе Йакуркка çапăçнине курнăҕҕĕ. Çавсен суҕĕ пуҕ, тесе тытрĕ Верук повеска.

Анҕах ку хут сута каймалли мар, пуштăна каймалли пулҕĕ. Верук вăрахăн йăлтах вуласа кăларҕĕ. Пуштăра мĕн выртнине те пĕлет. Анҕах, мĕн пур ăшăнҕе, мĕскер? Пĕлме хĕн! Ваçикпе мĕн те пулин пулманши? Ку вара Ваçикĕн йапалисем марши? Çавăнпа та халҕ-ҕен çырмасăр пурăнҕĕ пуҕ, тесе аварташ Верук хăй пуçĕнҕе.

Çĕр каçиђђен Верук куç хупаймарĕ. Ваçик çинђен темĕн те шутлаť. Ара, салтак вĕт! салтакпа темĕн те пулма пултараť.

Çил ађи шăл витĕр сивĕ сывлăш вĕрет. Кутсăр та пуççăр çанталăк кĕрлет. Трупа та тискерĕн, мĕкĕрсе улаť. Тухма та хăрушă, ђун сикет—хăраť.

Ирхинс ирех Верук хыççăр çунана çӳрен кĕсрине кӳлђĕ те, йурттарђĕ пушта сакăр çухрăма. Каçхи çилтăман çул çине ларман. Çавах кĕсрине йуртма пит йăвăр. Çуна кăђăртатса макăраť.

Уйар.

Сивĕ.

Çил.

Поссылккă. Анђах Верук уçса пăхаймасť. Киревсĕр шухăш унтан тасалмасť: Тен. Ваçик вилнĕ, тен ку унăн йапалисем?..

Киле çитиђђенех пусмăрласа пыђĕç Верука çакă шухăшсем. Ђылайђђен пăхса тăђĕ Верук сĕтел çине хунă поссыпкка. Хăйĕн çӳхе, пĕђĕк тути хĕррине çавăрса çыртрĕ те, сӳтрĕ вăрахăн. Ваçик аллипе çырнă çырăва курах карĕ. „Есĕ çырăва вĕреннĕшĕн хĕпĕртесе йаратăп сана çак йапаласене. Шутсăр хĕпĕртерĕм, сăмахсене

ытла та çавăрса çырнăçке. Хире хирĕç тăрса калаçнă пекех, киле пырса курнă пекех туйĕнђĕ. Анне вăрçмаçти есĕ шкула çӳренĕшĕн, Верук?“ тенĕ çырăвăн пĕр вырăнĕнђе.

Верук ађа пек хĕпĕртерĕ. Хĕпĕртемесĕр! Йӳнĕ поссылккă мар: пушмак, хулăм тутăр. Йуратнипе çеç те мар, çырăва вĕреннĕшĕн хĕпĕртесе йанă йапаласем!

— Ђипер ађам, терĕ амăшĕ хăй çине хулăн тутăра пырса хурсан, йăлкăшса пăхса.

— Ку сана пултăр, пушмакĕ мана... терĕ Верук йăлкăшса кулса амăшне.

Сисмесĕрех Верук ликпунктран вĕренсе тухрĕ. Сăнавра Верук пурне те тĕлĕнтерђĕ. Хе.ăй панă ыйтусене тавăрмасăр пĕрне те хăвармарĕ Верук — пуринђен пĕри!..

*
* *

Çанталăк ăшă. Тапхăр-тапхăр çеç ăшă çил вĕрсе пите ађашлаť. Ыраш пуссине пуçран шăлса, çĕр çумне тайаť. Çитĕннĕ ыраш ађашшăн кулса унпа йăпанаť. Вăхăтра ларнă шăркине çĕр çине сапаť.

Лапсăркка хурăн çӳçĕсене йанă. Вăрăмăн, уççăн силленсе илет. Ун айĕнђе пĕр ушкăн хĕр. Ушкăнра унта, арăм та — пурĕ пĕр. Верук

7195

та кунтах кĕпе умĕ тĕрлет. Ваçике кĕтсе, кĕпе хатĕрлет.

Йурă.

Кулă.

— Ваçик каллех çыру çырми пулђĕха. Ыран кантура кайса пăхас пулĕ-пĕрре, терĕ Верук тĕррине куçарса.

— Айта пĕрле кайатпăр, инке, терĕ сарă çӳçне кăтăр каснă комсомолккă Урине.

Çакăнтан вара Верук кантура çӳреме тытăнђĕ. Сарă çӳçне кăтăр каснă Урине Верука комсомол ĕретне тăратрĕ.

* * *

Ку ĕнтĕ темиçе çул иртрĕ. Верукăн Ваçикĕ те тахçанах таврăннă. Хаљ вĕсен икĕ ађа. Кăтра, сарă çӳçлĕ ађисем савăнтараççĕ вĕсене. Анђах нихăçан ђăрмантармаççĕ, ђармаççĕ ĕçлеме. Верук — хĕрарăм телекаткă. Верук — йалканаш претçетаттĕлĕ. Ваçик — копператтив пуçлăхĕ.

Веруксен йалĕ йăлтах улшăннă. Ĕлĕк лапђăнса ларнă халăх пӳрђĕ вырăнне — вуламалли çурт. Хăрах турталлă, тевĕшсĕр выртакан пушар урариисем патĕнђе, суккăр старик туйа çинђе усăнса ларнă пулсан, хаљ унта çĕнĕ сарай, çĕнĕ хатĕр, йаланах лаша.

Хĕрлĕ сухал Йакку лапки тахçанах пĕтнĕ. Иаккăвĕ хăй те тăвар илме копператтиве çÿрет.

Авалтан йапăхса выртакан кивĕ пĕве те Атăл таппи пек çутăлса, йалкăшса выртаť.

Веруксен йалĕ кăна мар, вĕсемпе йунашар йалсем те, Веруксен йалĕ 6 пусăллă уйа куçнине кура, тăвата пусăллă уйа куçрĕç.

Верук ĕçлет. Куљттурăллă пурăнăç сарăлса пыраť.

---

## ЧĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

**кăларнă йалхуçалăх çинчен çырнă кĕнекесене Канашри, Сĕнтĕр-Вăрринчи, Шупашкарти, Йетĕрнери макаçăнсенче, тата пур акĕнствăсенче те илме пулаť.**

ГУБИН В. М.

Как сохранять продукты впрок. Стр. 40. Цена 15 к.

ВИННЕР В.

Çĕрулмипе тымар çимĕçсем. (Картофель и корнеплоды). Формат 13×17 см. Стр. 52. Цена 25 коп.

КОСТЫЧЕВ П.

Çĕрĕçĕ кĕнеки. (Азбука земледельца) Форм. 15×23 см. Стр. 192. Цена 80 коп.

ХАРЧЕНКО.

Тырпулсене ылмаштарса акса пымалли йĕркесем. (Севообороты). Фор. 13×17 см. Стр. 172. Рис. 10. Цена 28 коп.

МАКСИМОВ П. П.

Пыл хурчĕсене пăхса усрас ăсталăхсем (Методы пчеловождения). Ф. 15×23 см. Стр. 180. Рис. 110. Ц. 1р. 60 к.

ДЕРНОВ М. А.

Утарăн тĕп ĕçĕсем (Главные пасечные работы). Перевод К. М. Никишева. Форм. 15×23 см. Стр. 156. Цена 85 коп.

УЛИТИН.

Виçĕ пусса сут туни. (Суд над трехполкой). Агитпьеса в 1-ом действ. Форм. 13×17 см. Стр. 91. Цена 28 коп.

Хакӗ 10 пус.

Цена 10 коп.